## «ÇЫРМАРИ ЮРĂ»

(Чĕмпĕр шкулĕ, И. Я. Яковлев тата
чăваш ĕçхалăхĕн музыка искусстви çулĕ)

«Иван Яковлевич çуралнă вăхăт чăваш халăхĕшĕн ылханлă вăхăт пулнă. Ĕнтĕ темиçе çĕр çул чăвашсем йывăр чурара пусмăрланса пурăннă. Самана пăч-тĕттĕм пулнă... Чăваш хĕрĕсен хурлăхлă юррисем каçпа çеç чĕрене касса çырма тăрăх таçта кайса çухалнă», тесе каланă А. Михайлов «Канашăн» 192-мĕш номерĕнче. Çакă вăл питĕ тĕрĕс сăмах. Чăнах та, ун чухнехи саманара чăваш музыкĕ «çырмари юрă» анчах пулнă. Мĕншĕн тесен чăваш хура халăхĕ вăйлă пусмăр айĕнче хĕн курса пурăннипе ирĕк вырăнсенче, таса уйсенче, аслă çул хĕррисенче пурăнма хăранă. Вăл ĕслеттерсе хăратнă тискер кайăк пек шăршлă çырма-çатрасенче çеç тарса пытанса пурăннă. Ун чухне чăваш чĕлхинчен мăшкăланă, чăваш юрринчен кулнă. Çавăнпа чăвашсем ют халăхсем умĕнче çăвара уçса ирĕклĕн хытă кăшкăрса юрлама вăтаннă. Каçсерен çеç чăваш ялĕсенче уявра вылякан хĕрсен хурлăхлă юррисем çырма тăрăх илтĕнкеленĕ... Çапла пулнă Иван Яковлевич çуралнă вăхăталла.

Çав çырмари хурлăхлă юрă Иван Яковлевич чĕрине те чылай каснă. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннисем ун çинчен пурте лайăх пĕлеççĕ пулмалла. Чăваш музыки çинчен сăмах тапратса ярсан, Иван Яковлевич час-часах çакна каласа паратчĕ. Пĕрре ĕлĕк чăваш шкулĕсене пăхса çӳренĕ вăхăтра Иван Яковлевичăн чăваш ялĕ витĕр тухса таврăнмалла пулнă. Ывăннипе ямшăк та лашисене хуллен уттарса пынă. Иван Яковлевич тĕрлĕ шухăша кайнă. Сасартăк сас-чĕвĕсем, юрлани, çуйăхни илтĕне пуçланă. Ял вĕçĕнче, çерем çинче çамрăксем уявра юрланă пулнă. Хурлăхлă юррăн сыпăкĕсем лăпкă тӳлек сывлăшра пĕрре

хыттăн илтĕнсе илнĕ, тепре сывлăш чĕтренĕ майĕпе шăранса илтĕнми пулса таçта çухалса кайнă. Çакна илтсен Иван Яковлевич сасартăк ыйăхран вăранса кайнă пек тĕлĕнсе хытса кайнă. Вăл хăй те чăваш ачи пулнă, ача чух чăваш хушшинче ӳснĕ, чăваш юррине темĕн чухлĕ илтнĕ, хăй те пĕрре анчах мар юрланă пулĕ чăвашăн çавăрнăçуллă юррине... Анчах нумай вĕреннĕ май, тĕрлĕ культурăллă халăхсем çинчен пĕлсе çитсен, тата чăваш мĕскĕн халăхне те çав культурăллă халăхсен çулĕ çине кăларма шухăш тытнă вăхăтра — çакă çырмари хурлăхлă чăваш юрри Иван Яковлевич чĕрине вут пырса тивнĕ пек ыраттарса янă. Çавăнпа, ялтан тухсан, Иван Яковлевич ямшăка лашисене тăратма хушса, хăй урапа çинчен анса, карта çумне пырса тăнă та, ăш тулса çитнипе, чăтаймасăр йĕрсе янă. Вара вăл чăваш хĕрĕсем хурлăхлă юрланине чылайччен итлесе тăнă. Вăхăт кĕске пулсан та, Иван Яковлевич çак касне чăвашăн пусмăрлă, чухăн, илемсĕр, мĕскĕн пурнăçĕ çинчен питĕ тарăн шухăшласа çĕр каснă.

Çакăнтан пуçласа Иван Яковлевич хăйне хăй тата пушшех вирлĕ сăмах панă: чăваш халăхĕшĕн пĕтĕм вăйран тăрăшса, ăна культурăн аслă çулĕ çине çирĕппрех тăратас тесе. Вăл хăйне панă сăмахсенчен пĕртте ӳксе юлманнине эпĕр халĕ ĕнтĕ хамăр куратпăр. Çав хушăрах Иван Яковлевичăн ĕçĕсем вăл чăваш искусствипе чăваш музыкишĕн тăрăшни çинчен те пире нумай каласа парççĕ. Паçăрхи сăмаха аса илсен, Иван Яковлевич чăвашăн «çырмари юррине» искусствăн аслă, культурăллă çулĕ çине кăларас тесе чылай тăрăшнă.

Халăха музыкăн культурăллă çулĕ çине кăларас тесен, чи малтанах шкулсенче ачасене юрлама е музыка калама вĕрентес ĕç çинчен манас пулмасть, вăл ĕçе малалла яма тытăнас пулать. Иван Яковлевич ĕçленĕ вăхăтра чăваш шкулĕсенче ун пек ĕç пулма пултарнă-ши? Музыка ĕçне вĕрентме мар, вăл вăхăтсенче чăваш хушшинче чи малтанах шкулĕсем те сахал пулнă. Иван Яковлевич тăрăшнипе чăваш хушшинче пин ытла шкул лартнă. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренсе тухнă учительсем ялсем тăрăх сапалансан тин чăваш хушшинче хут вĕрентес ĕç тĕрĕсрех çул çине тухса пыма пуçланă. Çав хушăрах ыттипе пĕрле музыка-юрă ĕçĕ те тапранса каять. Чăваш хушшинче чи малтанхи хорсем шăтса ӳсме пуçлаççĕ. Ун чухне юрлама вĕрентес ĕçе малтанах тĕрĕс çул çине ӳкернĕ теме пултараймастпăр. Мĕншĕн тесен ун чухнехи самана пусмăрĕ айĕнче пурăннă пирки, шкулсенче пуринчен ытларах кĕлĕсем, молитвăсем юрлаттармалла пулнă. Иван Яковле-

вич Чӗмпӗр шкулӗнче пӗр кӗлӗсем анчах юрланипе ҫырлахман. Шкулта музыка теорине, нотӑпа сольфеджио юрлама, «светски» юрӑсене — мӗн кирлине пурне те вӗрентнӗ. Кунсӑр пуҫне тата ачасене купӑс (скрипка) калама вӗрентнӗ.

Шкулти концертсенче вӗренекенсем хорпа та, пӗччен те тухса юрланӑ, оркестрпа та, соло та каласа панӑ. Ҫаваппа Чӗмпӗр шкулӗнче вӗренсе тухнӑ учительсем музыка ӗҫӗнче, юрлаттарас ӗҫре хӑшӗ-хӑшӗ чылаях та чухлама пултарнӑ. Вӗсем ялти шкулсене сарӑлсан та ҫав ӗҫе пӑрахман. Вӗсем ачасене юрлама вӗренткеленех. Хӑшӗпӗри чылаях тӗрӗс те илемлӗ юрлакан хорсем туса ӗҫлесе пурӑннӑ. Вӗсем тата ҫав хушӑрах халӑх юррисене пухма тытӑннӑ. Вӗсем хушшинче чылаях талантлӑ ӑстасем пулнӑ.

Пурне те пӗлсе ҫитерес ҫук, анчах ҫаксен ячӗсене каламасӑр хӑвармалла мар. Вӗсем: Митрофан Дмитриев, Василий Иванович Колпаков, Роман Никифорович Идобаев, Петр Васильевич Пазухин, Тимофей Степанович Малышев тата ыттисем те.

Ватӑларахпа Иван Яковлевич музыка ӗҫне тата хытӑрах юратма пуҫларӗ. 1906 ҫулта Чӗмпӗр шкулне юрӑ ӗҫне вӗрентме Иван Митрофанович Дмитриев кӗрет (ку хайхи ҫӳлерех асӑннӑ Митрофан Дмитриев ывӑлӗ пулать). Питӗрти Придворнӑй капеллӑран вӗренсе тухнӑскер, Иван Митрофанович питӗ вӗреннӗ музыкант пулнӑ. Вӗрентес енчен те вӑл питӗ талантлӑ преподавательччӗ. Вӑл вӗрентнӗ вӑхӑтра Чӗмпӗр шкулӗнчи чӑваш хорӗ питӗ ӳссе, вӑйланса, чапа тухса кайрӗ. Чӑваш хорӗ юрланине итлеме хула вырӑсӗсем чӑваш шкулне ятарласа ҫӳретчӗҫ. Каффедральнӑй хорпа тата Троицкий собор хорӗ хысҫӑн чӑваш хорӗ тӳрех вырӑн йышӑнса тӑма пуҫланӑ.

Мухтав сарӑлнӑ майӗпе чӑваш хорне тӗрлӗрен съездсене, собранисене чӗнме пуҫларӗҫ. Астусан: земски собранисенче, дворянсен, архиерейсен, миссионерсен собранийӗсенче юрланӑ. Ҫапла пӗрре 1909 ҫ. январӗн 19-мӗшӗнче Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи Архивнӑй комиссин собранинче юрласа панӑ. Комисси журналӗнче ҫырнӑ тӑрӑх хорта 60 ача юрланӑ, пӗтӗмпе 13 чӑваш юрри юрласа панӑ. Чӑваш хорӗ юрлани ҫинчен ҫырнӑ: «В отношении стройности исполнения чувашский хор заслуживает большой похвалы. Сольный номер «Плач невесты», исполненный воспитанницей А. Букаровой, был особенно удачен. Исполнительница обратила на себя внимание звучностью и красотой голоса, безукоризненностью интона-

ции, ровной, спокойной выдержкой и полной естественностью», — тенӗ.

Кунта юрланӑ хыҫҫӑн чӑваш хорне ҫав хӗлех тепре итлеме ятарласа Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи дворянсен собранине чӗннӗ. Унта та илемлӗ юрланӑшӑн чӑваш хорне тата Букаровӑна чылай чыс туса мухтанӑ. Акӑ хайхи «ҫырмари юрӑ» ӑҫта янӑраса илтӗнме пуҫланӑ. Пӗр пӗчӗк чӑваш хорӗ пӗтӗм Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи дворянсем, аслӑ чиновниксем, улпутсем, губернаторсем, генералсем, архиерейсем умӗнче тухса юрласа хӑйӗн илемлӗ сассипе ҫак мӑнтӑрпа шыҫса ӳкнӗ улпутсене, хӑшӗ-хӑшӗ ют патшалӑхсенче те курса ҫӳренӗскерсене, тӗлӗнтерсе пӗтернӗ, чӑваш юрри илемлӗхне туйтарнӑ.

Анчах ҫак сӑмахсем хыҫҫӑн хӑшӗ-пӗри мана: ку мӗнле вара дворянсем мухтанишӗн хӗпӗртесе ӳкнӗ, вӗсем мухтани ҫине пӗрре лайӑхраххӑн сурсан та юрӗччӗ тесе тӳрех ҫулӑхӗҫ. Малтанах пӗлтерме хатӗр: ҫулӑхсан та юри ӳкӗте кӗмесӗр ҫулӑхни анчах пулӗ, мӗншӗн тесен дворянсем мухтанишӗн мар ҫыратпӑр эпӗр ҫак фактсем ҫинчен. Ҫук. Дворянсен собранийӗнче тухса юрлани чӑваш музыкишӗн тӗрӗс ҫул пулнӑ тесе мӗнле пуҫсӑр ҫын шарлама пултарӗ-ши?

Иван Яковлевича та дворянсемпе тата архиерейсемпе туслӑ пулса варлӑ пурӑннӑшӑн никам та мухтама пултараяс ҫук пек. Мухтаса мар: Чӑваш шкулӗн хорне миссионерсен умне туртса кӑларса, вӑл чӑваш хура халӑхӗн илемлӗ пултарӑвне кӑтартасшӑн, палӑртасшӑн пулнӑ. Ӗлӗк вӑл хӑй чӑваш хӗрӗсен хурлӑхлӑ юррине итленипе хурланса, карта юпи ҫумне тӑрса, чӑтаймасӑр йӗрсе янӑ пулсан, халӗ ҫакӑ юрӑсемех дворянсен собранийӗнче хӑйӗн мӗскӗн илемӗпе культурӑллӑ класс ҫыннисене тӗлӗнтерни Иван Яковлевичшӑн питӗ паха, питӗ чыслӑ япала пулнӑ. Ӗлӗк улпутсем чӑваш юрринчен мӑшкӑлласа кулнӑ пулсан, халӗ ҫав кулакансем хӑйсемех чӑваш юррине чыс туса мухтанӑ. Вӑл чыс ахаль иртмен. Иван Яковлевичӑн политикинче унӑн хӑйӗн усси пулнӑ. Вӑл чыс Иван Яковлевича хӑйӗн йывӑр ӗҫне тунӑ ҫӗрте ҫӑмӑллӑн сывласа илме пулӑшнӑ, пӑвӑнса тулса ҫитнӗ кӑмӑла уҫса яма меслет тупса панӑ. Кунсӑр пуҫне тата акӑ ҫакна та манмалла мар. Иван Яковлевичӑн тавраллах курайман тӑшмансем питӗ нумай пулнӑ. Вӗсем выҫӑ кашкӑрсем пек хупӑрласа ҫисе ярасшӑн тӑнӑ Иван Яковлевичӑн ҫулне пӳлсе. Вӑл тӑшмансем Иван Яковлевича пӗтерсе пӑрахайман, мӗншӗн тесен Иван Яковлевич хӑй арӑслан пек паттӑр ҫын, анчах ҫавах тӑшмансем ӑна нумай тарӑхтар-

нă, вĕсем Иван Яковлевича пĕтересшĕн тăрăшнă, чăваш шкулне хупса лартма май шыранă, чăваш хушшинче çĕнĕрен шкулсем уçнăшăн вырăнсăр укçа пĕтет, тесе тавлашнă, шкулсенче чăвашла вĕрентнине хирĕç пулнă т. ыт. те.

Иван Яковлевич çав усалсемпе 50 çул хушши кĕрешнĕ. Соборсенче юрланăшăн тиркемелле. Вăл Иван Яковлевичăн чирĕ пулнă. Анчах çак фактсем вĕсем Иван Яковлевич ĕçне тĕрĕс кăтартаççĕ. Вĕсем — Чĕмпĕр шкулĕн историнче чăн пулса иртнĕ событисем. Чăнлăх: çырмасенче анчах каçпа янăраса çухалакан чăваш юррине Иван Яковлевич çакăн пек мелсемпе культура çулĕ çине кăларнă, чăваш хура халăхĕшĕн пуçласа янă культурăллă ĕçе хăй хӳттипе хӳтĕлесе, çак революциллĕ саманана тухиччен çăлса тăнă.

Çав вăйлă, вĕçĕмсĕр кĕрешӳре Иван Яковлевич тăшман вăйĕсемпе те усă курма меслет тупкаланă. Вăл чи аслă чиновниксене хăй майлă çавăрса илме политика туса хунă. Аслисене хăй майлă çавăрса илсе, кĕçĕнреххисене ним мар çавăра-çавăра çапнă. Ку енчен Иван Яковлевич вăйлă пулнă. Çавна кура хăш-пĕр улпутсем хăйсемех Иван Яковлевича йăпăлтатма пуçланă, ăна юрасшăн пулнă, хăшĕ-хăшĕ Иван Яковлевичран пулăшу ыйтнă, ун урлă чинсем, орденсем, медальсем илме тăрăшнă.

Акă, сăмахран, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи пуян фабрикант Н. Я. Шатров Иван Яковлевич хӳттипе дворянсен хушшине хутшăнма пуçланă, орденсем, медальсем илкеленĕ. Уншăн Н. Я. Шатров Чăваш шкулĕнче икĕ хутлă чул çурт лартса панă. Вăл çурт халĕ те чăваш шкулĕнче чи лайăххи. Çав ĕçе тума çав тери ăслă, çав тери чее, дипломатлă çын пулнă Иван Яковлевич. Анчах çавăн пек пысăк, хутăшлă, тарăн, ăслă ĕçре Иван Яковлевич пур япаларан та усă курма меслет шыранă. Çапла ĕнтĕ «çырмари юрă» та Иван Яковлевича çав ĕçе тунă çĕрте пулăшу урапине çу сĕрнĕ пек çăмăллăн кусма меслетлесе пынă.

1910—1911 çулсенче Иван Яковлевич музыкăна вĕрентес ĕçе тата вăйлăрах тапратса яма тытăнать. Анчах Иван Митрофановичăн пурнăç кунĕ-çулĕ татăлнă пирки вăл ĕçре чылай чăрмавсем пулма пултарнă. Талантлă вĕрентекен вырăнне чăваш вĕрентекенсенех тăратас тесе Иван Яковлевич К. Н. Эсливановăна, С. М. Максимова, Ф. П. Павлова чĕнсе илсе, вĕсене музыка ĕçне ятарласа вĕрентет. Шкул валли духовой оркестр, çĕнĕрен скрипкăсем, альтсем, виолончельсем, контрабассем илет. Шкулта виçĕ тĕслĕ оркестр ĕçлеме тытăнать: духовой, струннăй

тата симфониллӗ оркестр. Вӗренекенсем виҫӗ тӗслӗ хорта юрлаҫҫӗ: хӗрача, арҫын ача тата хутӑш хорта. Музыка калама вӗрентекенсем О. Ф. Крамер, Н. И. Попов, Н. П. Лыбин, С. М. Максимов. Вӗсенчен икӗ ҫул хушшинчех С. М. Максимов мала иртсе каять: вӑл симфониллӗ оркестра тапратса ярать, ӑна пысӑклатса, вӑйлатса ярать.

Юрлаттаракансем: К. Н. Эсливанова, Ф. П. Павлов. Ӗнтӗ чӑваш шкулӗнче консерваторинчи пек ир пуҫласа каҫчен музыка сасси йӑслать. Кӗркуннерен пуҫласа ҫуркуннеччен ҫаплах умлӑ-хыҫлӑ концертсем пулса иртеҫҫӗ. 1913 ҫулта февралӗн 23-мӗшӗнче шкулта вӗренекенсен вӑйӗпех опера лартнӑ. Тӗп партине выляса юрлакансем: К. Н. Эсливанова (сопрано), В. И. Дубровин (тенор), Ф. П. Павлов (баритон). Дирижерсем: С. М. Максимов, юлашки действинче — Ф. П. Павлов. Художник-декоратор — К. В. Иванов («Нарспи» авторӗ). Ку ӗҫ ҫинчен «Симбирянин» хаҫат ҫинче ҫырнӑ.

Иван Яковлевич музыка ӗҫӗшӗн ҫав тери тӑрӑшни ахаль иртмен. Вӗренекенсем хушшинче лайӑх музыкантсем, юрлама пӗлекенсем тата композиторсем палӑрма пуҫларӗҫ. Вӗсем кайран та, ялти шкулсем тӑрӑх сапалансан, ҫав ӗҫе пӑрахман. Ҫавна пула чӑваш шкулӗсенче илемлӗ юрлама пултаракан хорсем шӑтса ӳсме пуҫларӗҫ. Тата вӗсемех те халӑх юррисене, кӗввисене пуҫтарса хорпа юрлама гармонилеме тытӑнчӗҫ. Вӑл халиччен пулман ҫӗнӗ ӗҫ. Хӑшпӗр чухне пулкаланӑ пулсан та (Мошков т. ыт. те), ҫавах чӑваш музыкин ӗҫӗсем, тӗрӗссипе каласан, чӑваш шкулӗнчен пуҫланса кайнипе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Вӑл ӗҫӗн хӑйӗн ҫулӗсем нумай йӳплӗ, вӗсенчен хӑшӗ тӗрӗсси — ӑна халӗ чӑваш композиторӗсем питӗ тишкерсе пыраҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ пӗр ҫӗрте, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче, пуҫланса кайнӑ ӗҫ чӑваш хушшинче тавралла сарӑлса, хӑйӗн уссине кӑтартма пуҫларӗ. Чӑваш музыкин ҫӗнӗ историйӗ ӗнтӗ ҫакӑнтан пуҫланса пырать. Ӗнтӗ «ҫырмари сыпӑк», ӗнтӗ «ҫырмари эпоха» иртсе кайрӗ, ӗмӗрӗн кайри тӑршшӗне кайса пытанчӗ. Чӑваш музыки чӑтлӑх ҫырмасенчен, симӗс йӑмраллӑ ялсенчен тухса, пысӑк хуласем тӑрӑх сарӑлчӗ.

Революци пуҫлансан тӳрех Чӗмпӗрте, Хусанта, Шупашкарта, Ӗпхӳре, Мускавра т. ыт. ҫӗрте те чӑваш хорӗсем йӗркеленме пуҫларӗҫ. Вӗсенчен чи вӑйлисем Чӗмпӗртипе Шупашкартисем пулнӑ. Шупашкарти чӑваш хорӗ 1923 ҫулта Мускавра пӗтӗм СССР Ялхуҫалӑх выставкинче пӗр уйӑх ҫурӑ ытла юрласа пурӑннӑ. Унта чӑ-

ваш хорĕ ытти халăхсен хорĕсем хушшинче виççĕмĕш вырăн йышăннă. Вăл хор граммофонпа калама тăватă пластинка ӳкерттернĕ.

Юлашки икĕ çул хушшинче Шупашкарти музыка шкулĕ чылай чаплă ĕçлеме пуçларĕ. Шкул пуçлăхĕ С. М. Максимов тăрăшнипе шкул çумĕнче «Чувашская государственная художественная капелла» организациленчĕ. Капелла икĕ çул ĕçлет, вăл вăйланса, художество енчен ӳссе, таранланса пырать. Капеллăра чаплă юрă ăстисем юрлаççĕ: А. И. Токсина, А. Г. Казакова, Ленинградри оперăн артисчĕ И. В. Васильев. Вĕсем пурте Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренсе тухнăскерсем. Капеллăра чăваш композиторĕсем ĕçлеççĕ. Концертсенче пуринчен ытларах С. М. Максимовăн, В. П. Воробьевăн тата Ф. П. Павловăн сочиненисене лартаççĕ.

Юлашки çулсенче чăваш музыки çинчен çырнă кĕнекесем тухма пуçларĕç. Çапла ĕнтĕ чăваш музыкине наука енчен те тишкĕрсе вĕренме тытăннă. Ун çинчен Ф. П. Павловăн кĕнекисенчен пĕлме пулать. Тата чылай сборниксем çапăнса тухрĕç. Вĕсене пурте пĕлеççĕ.

Пĕтĕмпе шутласа илсен çак пысăк, культурăллă ĕçе пуçласа яраканĕ Иван Яковлевич. Çак ĕç çуралса тухнă йăви — Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ.

1928